Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

68 (7922) № ✻ Шăмат кун, 2011 çулхи сентябрь (авăн) уйăхĕн 3-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Кашнинех çĕнĕлĕх кĕтет

Вĕренӳ çулĕ пуçланчĕ

Раççейри пĕтĕм халăх савăнăçлăн паллă тăвакан уявсенчен пĕри вăл – Пĕлӳ кунĕ. Ватти те, вĕтти те çак асамлă куна ăмсанса кĕтет. Камшăн мĕнле пулĕ те, анчах Турайсемшĕн вăл кăçал чăнах пысăк уява çаврăнчĕ. Çакăн сăлтавĕ – ахаль те кивех мар шкул çу каçа тата ытларах çĕнелсе хăтланни. Çавăнпах пулĕ шкула вĕренекенсемпе вĕрентекенсем те, ашшĕ-амăшĕсемпе районти представительсем те, ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе специалисчĕсем те савăк кăмăлпа утрĕç. Епле савăнмăн-ха? Ачасем 2 миллион та 600 пин тенкĕлĕх капиталлă юсав ĕçĕсем тунă шкула каяççĕ вĕт!

Çĕнĕ вĕренӳ çулне халлланă линейка 9 сехетре пуçланчĕ. Ачасем аслисене илемлĕ шкулшăн тав туни уяв хăтне ӳстерчĕ кăна. Салам сăмахĕ каланă чух депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ тата Муркаш райпо канашĕн председателĕ Б. Андреев шкул ачисене 10 пин тенкĕлĕх страхлани те, «Три R» реклама агенствин пуçлăхĕ Ю. Романов принтер парнелени те, район администрацийĕн пуçлăхĕ ячĕпе «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕн ертӳçи А. Куликов пĕтĕм тĕнчери «Золотое руно» вăйă конкурсĕнче çĕнтернĕ А. Никифоровпа А. Печкова вĕренекенсене дипломсем пани те, Турай ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Павлов тăрăшуллă ачасене Тав хучĕсемпе укçан парнесемпе чыслани те уява çӳллĕ шайра ирттерме май пачĕç.

Капиталлă юсав пирки. Турай ял тăрăхĕ кăçал ял тăрăхĕсенче компактлă çурт-йĕр çавăрассипе комплекслă программăна хутшăнса çĕнтернĕ. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Павлов каланă тăрăх çак укçа шкула капиталлă юсама пулăшнă та. Шкулти юсав ĕçĕсене А. Баринов ертсе пыракан «Виком СК» организаци кĕске вăхăтра пурнăçланă. Строительсем уйăх хушшинче çивитти юсанă, çĕнĕ чӳречесем лартнă, классен алăкĕсене çĕнетнĕ, светильниксемпе эвакуаци пусми вырнаçтарнă, сантехникăпа шыв системине юсанă т. ыт. те.

– Çак ĕççене шкул хăйĕн вăйĕпе çеç пурнăçлама пултарайман пулĕччĕ. Тавах пире пулăшакансене, ачасен вĕренĕвне ырă тӳпе хывакансене. Юсаса çĕнетнĕ шкулта кашнинех çĕнĕлĕхсем кĕтеççĕ. Вĕсене алла илме пурте тăрăшасси пирки эпĕ иккĕленместĕп, – терĕ тав сăмахĕнче шкул директорĕ Ю. Герасимов.

Линейка вĕçĕнче кăçал пĕрремĕш класа каякан Ксения Петровăпа Даниил Петров **(сăн ӳкерчĕкре)** хăйсен аслă юлташĕпе шăнкăрав парса ачасене пĕрремĕш урока йыхравларĕç.

А. БЕЛОВ.
Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

Районта

Черетсĕр тăххăрмĕш лару

Депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн 2011 çулхи сентябрĕн 2-мĕшĕнчи 9 № хушăвĕпе депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр тăххăрмĕш ларăвне район администрацийĕн ларусен залĕнче сентябрĕн 9-мĕшĕнче 10 сехетре пухма йышăннă.

Пăхса тухма кун йĕркине çак ыйтусене кĕртнĕ:

1. РФ Федераллă Пухăвĕн улттăмĕш созыври Патшалăх Думине тата Чăваш Республикин пиллĕкмĕш созыври Патшалăх Канашне депутатсем суйласси çинчен.

2. Депутатсен районти Пухăвĕн 2010 çулхи декабрĕн 2-мĕшĕнчи С-3/2 № «О районном бюджете Моргаушского района на 2011 год» йышăнăвне улшăнусем кĕртесси çинчен.

3. Муркаш районĕн бюджечĕн тивĕçтереслĕхне шайлаштарма дотацисем уйăрассине уйрăм çынсен тупăшĕнчен налук илессин нормативĕпе ылмаштарасси çинчен.

4. Район администрацийĕ çумĕнчи административлă комиссин йышне улшăнусем кĕртесси çинчен.

5. Наградăласси çинчен.

3740 ача парта хушшине ларчĕ

Сентябрĕн 1-мĕшĕнче районĕпе 3740 ача парта хушшне ларчĕ. Шкул алăкне пуçлса уçса кĕрекенсем 368 ача. Вĕсем пĕлĕвĕн аслă тĕнчине çул уçма тытăнăç. Сентябрĕн 1-мĕшĕ вĕсемшĕн уйрăмах асра юлĕ: пĕрремĕш шăнкăрав, пĕрремĕш урок, пĕрремĕш класс, юнашар парта хушшинчи пĕрремĕш юлташ тата пĕрремĕш учитель.

2010–2011 вĕренӳ çулĕнче районти шкулсенче 3721 ача вĕреннĕ. 11-мĕш класран 243 ача тата 9-мĕш класран 390 ача вĕренсе тухнă. Вĕренӳре уйрăмах палăрăмлă çитĕнӳсем тунăшăн 18 вĕренекене ылтăн, 6 вĕренекене кĕмĕл медальпе наградăланă.

Çавна палăртмалла. Районти вĕрентӳ системин тĕп тĕллевĕ вăл пур гражданссене те пахалăхлă пĕлӳ илме майсем туса парасси пулса тăрать. Хальхи вăхăтра пĕлӳ парас ĕçе 49 вĕрентӳ учрежденийĕ туса пырать: пĕтĕмĕшле пĕлӳ паркан 24 шкул, шкул çулне çитменнисен 16 учрежденийĕ, 5 пуçламăш шкул-ача сачĕ, хушма вĕрентĕвĕн 4 учрежденийĕ.

Пур шкул ачисене те çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче ăнтăлу, ăнăçу, учительсене творчество энергийĕ, тӳсĕмлĕх тата аслă-тăнлă йышăнусем, ашшĕ-амăшĕсене хăйсен ачисемпе, вĕсен çитĕнĕвĕсемпе савăнма сунатпăр.

Ыран – Нефть тата газ промышленноçĕнче ĕçлекенсен кунĕ

НЕФТЬ ТАТА ГАЗ ПРОМЫШЛЕННОÇĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ!

Сире професси уявĕпе ăшшăн саламлатăп. Эсир пархатарлă тата пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçленипе республика тата район малалла аталанать, тĕрлĕ социаллă проектсем хута каяççĕ, çынсен ĕçлемелли тата пурăнмалли условийĕсем лайăхланса пыраççĕ. Газ промышленноç ĕçченĕсем тăрăшнипех хĕллехи сивĕ кунсенче эпир пурăнакан çуртсене ăшă пырса тăрать.

Эсир çĕнĕ тата перекетлекен технологисемпе усă курса малашне те пурнăçпа тан утса пырасса шанса тăратăп.

Уяв ячĕпе саламласа ăнăçу, çирĕп сывлăх, вăй-хăват, çĕнĕ ӳсĕмсем сунатăп.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ
Ю.А. ИВАНОВ.

Çурт-йĕр ыйтăвĕсемпе

Патшалăх çине кăна шанмалла мар

Юлашки вăхăтра хăйсен çурчĕсене пурăнма юрăхсăррисен шутне кĕртсе патшалăх шучĕпе урăх çурт-йĕр туянас е тăвас текенсен шучĕ ӳснине палăртмалла. Çавна май çакна каласа хăварасшăн.

Чи малтанах ку шута çирĕплетнĕ йĕркепе гражданссен пурăнма юрăхсăр, юсав ĕçĕсем туса ирттерме те, реконструкци тума та май çук çуртсем кĕреççĕ. Кунпа пĕрлех пурăнмалли условисем сывлăхшăн сиенлĕ пулнине те шута илеççĕ. РФ Пурăнмалли çурт-йĕр кодексĕн 2-мĕш пайĕн 1-мĕш пунктĕнче шăпах ĕнтĕ çавăн пирки каланă. Пурăнма юрăхсăр çурт-йĕр шутне капиталлă юсав ĕçĕсем туса ирттерес пулсан та унта пурăнма май çук çуртсене çеç кĕртеççĕ.

Практикăра харпăр хăйĕн çурт-йĕрĕ тĕлĕшпе ыйтусем пулма пултараççĕ. Çурт юрăхсăра тухнă пулсан патшалăх вĕсене урăх çурт-йĕрпе тивĕçтерме пултарать-и-ха?

Патшалăх (муниципалитет) харпăр хăйĕн çурт-йĕр хуçипе çĕре патшалăх е обществăлла ыйтусемпе уйăрнă май çурта пăсма тивнĕ чухне кăна «расчет» тума пултарать. Енчен те çĕр участокне çӳлте асăннă майпа тытса илмен пулсан çурт хуçи хăйĕн çуртне пурăнма кирлĕ шайра хăех тытса тăма тивĕç. Хапăрлăх хуçин хăйĕн пурлăхĕшĕн хăйĕнех тăрăшмалла. Апла пулсан пурăнмалли çурт-йĕре кирлĕ шайра тытса тăрасси тата юсав ĕçĕсем туса ирттересси те унăн тивĕçĕ пулса тăраççĕ.

Çавăнпа пĕрлех харпăр хăйĕн çурт-йĕрĕнче пурăнакан çын пурăнмалли çурт-йĕр кирлисен списокĕнче тăрать пулсан тата чрезвычайлă лару-тăрава пула пурăнмалли вырăнсăр тăрса юлнă пулсан ăна çурт-йĕрпе тивĕçтерме пултараççĕ. Енчен те çын пурăнмалли çурт-йĕр илме черетре тăман, унăн пурăнмалли урăх çурт-йĕр çук пулсан ăна саккунпа килĕшӳллĕн маневр фондĕнчен вăхăтлăх пурăнма çурт-йĕрпе тивĕçтерме пултараççĕ.

Çавна та каласа хăвармалла. Çуртсене пурăнма юрăхсăр тесе палăртас текенсен пурин те тенĕ пекех ачисем е ытти тăванĕсем пур. Документсене хатĕрлес тĕлĕшпе те вĕсем ытларах çӳреççĕ. Анчах та патшалăх çине шаннипе кăна нимĕн те пулмасть. Хăвăрăн харпăрлăхри пурлăхшăн хăвăрăнах ытларах тăрăшас пулать.

В. НИКИТИН,
район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕ.

Пирĕн рейд

Ĕçлекен валли йывăрлăх çук

Вăхăт кĕркунне еннелле сулăнма пуçланăран район шайĕнче йĕркеленĕ комисси хуçалăхсенче обществăлла выльăх-чĕрлĕх фермисене хĕле епле хатĕрленипе паллашма тухрĕ. Тĕрĕслевĕн пĕрремĕш кунĕнче «Восток», «Оринино», «Герой», «Передовик» ял хуçалăх производство кооперативĕсенче пултăмăр.

Халăх каларăшĕ вăрăм çула тухсан тĕл пулнă пĕрремĕш çын çул ăнăçлăхĕпе кăнттамлăхне палăртать тет. «Восток» хуçалăхăн Мулкачкассинчи ĕне фермине çитсен эпир хамăрăн çул çинче йывăрлăхран хăраман, вĕсене çĕнсе малашлăха пăхакан çынсене тĕл пултăмăр. Çăмăллăн мар пулин те хуçалăх çитес хĕл кунĕсене тĕплĕ хатĕрленни пирки кооператив ертӳçи М. Шишокин каласа пачĕ, ферма пурнăçĕпе паллаштарчĕ. Мулкачкассисем малтуртăмлă ĕçлени алă усмасан ӳсĕм çулĕ никамшăн та айккинелле пулманни пирки калать. Хуçалăхра хĕле хатĕрленсе ферма çывăхне утă-улăм çителĕклĕ турттарса хунă, юсав ĕçĕсем ирттернĕ, тислĕк кăларнă. Умри тĕллев – территорие çумран тасатасси, сысна фермине дезинфекцилесе сарайсене шуратасси.

«Восток» ял хуçалăх производство кооперативĕн Мулкачкассинчи ĕне ферминче вăй хуракан Иван Геннадьевич Толстовпа Вера Пантелеймоновна Иванова пенсионер-ĕçченсем хĕле хатĕрленессипе туллин ĕçлеççĕ. Вĕсен паянхи тĕллевĕ – выльăхсене ешĕл апатпа çителĕклĕ тивĕçтересси.

Ĕне ферминче паян майракаллă шултра выльăхсен кĕтĕвĕ 200 пуçа яхăн. Вĕсенчен 80-шĕ – сумалли ĕнесем.

– Умри ĕççене курсах тăратпăр. Пур ĕçĕ те хамăршăн пулнине шута илсе кашнин патне алă çитерме тăрăшатпăр. Тепĕр 2 эрне хушшинче сыснасем тăракан витене те дезинфекцилессипе ĕçсем ирттерĕпĕр, – терĕ малашлăха шантарса Михаил Николаевич.

Выльăх-чĕрлĕх отраслĕн аталанăвĕ кашни хуçалăх экономикинех тĕреклетмелли тĕп çул-йĕр. Çитес хĕл кунĕсенче выльăхсен йышне сыхласа хăварасси тата продукци илессине тивĕçлĕ шайра тытасси вĕсен паянхи тĕп тĕллевĕ. Çакна ĕненсе тата ăна пурнăçлассишĕн тимленине куртăмăр эпир «Герой» тата «Оринино» хуçалăхсене çитсен.

(Вĕçĕ 2 стр.).

Пирĕн рейд

Ĕçлекен валли йывăрлăх çук

(Вĕçĕ. Пуçл. 1 стр.).

Иртнĕ кунсенче дезинфекциленĕ тата шуратса хăт-илем кĕртнĕ фермăсен Çĕньял Шурчари ĕне тата сысна сарайĕсенче («Герой» хуçалăх) паян выльăхчĕрлĕх çителенĕклех.

– Малалла пăхаканăн çапла пулмалла та. Выльăхĕ те пур. Тирпейлĕхĕпе тасалăхĕ пирки те манмастпăр. Выльăх апачĕ янтăлассипе ĕçсене паян та чарса лартмасăр ыранхи кунпа пурăнатпăр. Çакăнта хуçалăх ертӳçи Р. Тимофеев тимленине палăртса хăварассăм килет, – терĕ тирпейлĕ те хăтлă ĕне сарайĕсемпе иртнĕ май фермăсен заведующийĕ Татьяна Валентиновна Иксанова. Сысна ферминче паян та юсавçăсен бригади ĕçлени хуçалăх хĕле тĕплĕ хатĕрленни пирки калать.

Фермăсем тăрăх иртнĕ чух пур çĕрте те пушар хăрушсăрлăх щичĕсем пурри, ĕçлекенсемпе пушар хăрушсăрлăх инструкцийĕ ирттерни палăрчĕ.

– Пушар хăрушсăрлăхне пăхăнмасăр производствăна аталантарасси пирки ан та шутла. Хуçалăхра çакна пурте асра тытаççĕ. Ку çулпа кайса пушар хăрушсăрлăхне ӳстерессине те иккĕмĕш вырăна хăвармастпăр, – терĕ ĕне ферминчи пушар щичĕ патĕнчен иртнĕ май «Герой» хуçалăх ертӳçи Р. Тимофеев.

Производство тенĕрен. Ăна хĕл кунĕсенче аталантарма хуçалăх 407 тонна утă (112 процент), 835 тонна сенаж (190 процент), 1596 тонна силос (130 процент) янтăланă. Эпир иртнĕ чух улăхра каю утти пресласси-пе ĕç вĕрени те ертӳçĕ сăмахĕсене çирĕплетрĕ кăна.

Уйрăм сăмах сыснасем пирки. Çывхаракан хĕл кунĕсенче кунта та выльăхсен йышне чакарасси пирки каласу çук. Паян хуçалăхăн сарайĕнче 700 пуçа яхăн сысна.

«Передовик» хуçалăхăн кăтартăвĕсем вара обществăлла выльăх патĕнче ыррине çеç шантараççĕ. Ахманери ĕне фермине çитсен утă рулонĕсене йĕркеллĕ купаламасăрах «управа» хунине тĕл пултăмăр. Ферма территорине строительство юлашкийĕсенчен тасатасси, ăна çум курăк «вăрманĕн» тыткăнĕнчен кăларасси, пушар щитне йĕркелесси, фермăна огнетушительсемпе тивĕçтересси умра тăракан тĕп тĕллевсен шутне кĕнине кашниех курса ĕнентĕмĕр.

«Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕн Патаккассинчи сĕт комплексĕнче паян 205 пуç сумалли ĕне тăрать. Вĕсем кулленех кĕтӳре. Сарайне юлакан пăрусемпе тынасем те кунĕпех уçă сывлăшра. Витесене дезинфекциленĕ.

Эпир çитнĕ тĕле Орининти сысна ферминче ĕçлекенсем каçхи ĕçе çитейменччĕ-ха. Ферма заведующийĕ тата вырăнти ветеринар Эльвира Ботникова пире таса та хăтлă сарайсемпе илсе çӳресе производство аталанăвĕпе тата ферма хĕле епле хатĕрленнипе тĕплĕ паллаштарчĕ.

– Ку таранччен пурнăçланă ĕçсене каялла ярас теместпĕрех. Аталанăвăн çĕнĕ çулĕсене шырама ĕçлекенсем ответлăха туйни пулăшать, – терĕ ферма ертӳçи.

Çапла, рейд бригади çитсе курнă хуçалăхсенче фермăсем хĕле хатĕрленмен тесе калама чĕлхе çаврăнмасть. Анчах кашнийĕнех вырăнти тирпейлĕх çине тепĕр хут çаврăнса пăхни хура кĕркунне пуçланиччен тата хĕл кунĕсем çитиччен ытлашши пулмĕччĕ. Тĕрĕслевсем малалла пыраççĕ. Вĕсем пирки те хаçат страницисенче каласа парăпăр.

Рейд бригади:

Т. АЛЕКСЕЕВА, ял хуçалăх пайĕн тĕп специалист-эксперчĕ;

Л. ФЕДОРОВА, выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцири выльăх тухтăрĕ;

К. ПОПОВ, патшалăх пушар надзор пайĕн инспекторĕ;

А. БЕЛОВ, район хаçачĕн ял хуçалăх пайĕн ертӳçи.

Суд материалĕсем тăрăх

Кредит илтĕн – вăхăтра тӳле

Хальхи вăхăтра кредит организацийĕсем сахал мар. Вĕсем гражданселе хăш чухне ытлашши нимĕн уяса тăмасăрах кредитсем параççĕ. Çыннăн кредит тӳлессин пултараслăхне те пăхса тăмаççĕ. Нумай чухне темиçе минут хушшинче тенĕ пекех пĕчĕк мар сумма алла илме пулать. Ĕç укçин шайне те ыйтмаççĕ. Официаллă ĕç вырăнĕ çук çынсене те кредитсем параççĕ. Кун пек чухне кредит организацийĕ умĕнче поручитель пулакансене уйрăмах тимлĕ пулма ыйтас килет.

Акă Я. гражданин хăйсен ялĕнче пурăнакан В. гражданинпа калаçса татăлнă, шанăçа кĕнĕ. Ăна хăйĕн хĕрĕн туйне ирттерме продуктсем туянма пулăшнă. Хыççăн тата В. эрех ĕçменнине пĕлсе тăнă çинчех ун патне водка эрехпе пынă. Çапла вара вăл ăна Муркашри потребительсен пĕр кредит кооперативĕнче поручитель пулма ӳкĕте кĕртнĕ.

Çапла вара Я. гражданин 33 пин тенкĕ кредит илнĕ, займ суммине тата унпа усă курнăшăн çултăлăкри 36 процент ставкине тӳлесе татма шантарнă. Унăн кашни уйăхăн 20-мĕшĕччен палăртнă суммăна тӳлесе тăмалла пулнă. Анчах та вăл займ шучĕпе 11 пин тенкĕ, процентсем шучĕпе 7426 тенкĕ те 44 пус кăна тӳленĕ. Ытти суммăна тӳлессинчен пăрăннă.

Я. кредитпа процентсене тӳлемен пирки кредит кооперативĕ мировой судья патне тухрĕ, ун тĕлĕшпе иск требованийĕ тăратрĕ.

Суд ларăвĕнче çакă палăрчĕ. Кредит илекен çак суммăна вăхăтра тӳлесе татассинчен, судран пăрăнать. Хăй Мускавра, ăçта ĕçленин тата пурăннин вырăнĕ паллă мар. Кунпа пĕрлех вĕсен мăшăрĕпе пĕрлехи харпăрлăхĕнче икĕ магазин пур.

Анчах çавна та манмалла мар. Саккунпа килĕшӳллĕн кредитор умĕнче поручитель те кредит илекенпе пĕр шайрах ответлă пулса тăрать. Ку вăл процентсене тӳлессипе, суд ларăвĕсене ирттерме каякан тăкаксене саплаштарассипе т. ыт. те çыхăннă.

Çапла вара Я. гражданин 2009 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче кредит илнĕренпе 2011 çулхи майăн 23-мĕшĕччен унпа усă курнăшăн процентсене тӳлесе татман, пĕтĕмпе 7426 тенкĕ те 44 пус çеç тӳленĕ. Займпа усă курнăшăн тӳлемелли парăм 10021 тенкĕ те 23 пуспа танлашать. Хыççăн вара 2011 çулхи майăн 24-мĕшĕнчен тытăнса займпа усă курнăшăн тӳлесе татман 22 пин тенкĕшĕн 36 процент шучĕпе шыраса илме тивет.

Мировой судья парăмăн тӳлесе татман виçин шайне, займпа усă курнин процентчĕсен суммине, тивĕçсене пурнăçламаннин вăхăтне шута илсе пение (неустойка) 8 пин тенкĕ таран чакарма йышăнчĕ. Судăн иск требовнийĕсене тивĕçтернĕ май патшалăх пошлини шучĕпе иск требованийĕсене 1400 тенкĕ те 64 пус тӳлемелле турĕ.

Мировой судья йышăнăвĕпе кредит кооперативне Я. гражданинран займ укçи 22 пин тенкĕ, займпа усă курнăшăн процент шучĕпе 10021 тенкĕ те 23 пус, неустойка шучĕпе пени 8 пин тенкĕ, 2011 çулхи майăн 24-мĕшĕнчен тытăнса вăхăтра тӳлесе татман 22 пин тенкĕ займăн çулталăкри 36 процентне, патшалăх пошлини тӳлессипе суд тăкакĕсене 700 тенкĕ те 32 пус шыраса илмелле турĕ.

Практикăра ытларах чухне парăма камăн яланхи ĕç вырăнĕ пурринчен, пенси илсе тăраканран шыраса илеççĕ. Асăннă тĕслĕхре вара Я. гражданин суд иртнĕ хыççăн пĕтĕм парăма кооператива хăй тӳлесе татрĕ.

Т. САЛДЫРКИНА,
1-мĕш номерлĕ суд участокĕн мировой судьи.

Сентябрĕн 4-мĕшĕ – Нефть тата газ промышленноçĕнче ĕçлекенсен кунĕ

Пĕрлехи ĕç тĕллевĕ – çынсен пурнăç условийĕсене лайăхлатасси

Ял çыннин пурнăç условине «кăвак çулăм» ырă енне самай улăштарчĕ. Унăн ырă сĕмĕ ялсене çитичченхи самант халĕ хыça кăна юлчĕ ĕнтĕ. Кашни хуçалăхра çут çанталăк газĕ çунни пуриншĕн те питĕ меллĕ. Çак ырлăх вара нихăçан та ан иксĕлтĕр. Çак сăваплă ĕçе районта «Чувашсетьгаз» уçă акционерлă обществăн «Моргаушимежрайгаз» филиалĕ йĕркелесе пырать, палăртнă ĕçе туллин пурнăçлать.

Сентябрĕн 4-мĕшĕнче нефть тата газ промышленноçĕнче ĕçлекенсем хăйсен профессиллĕ уявне паллă тăваççĕ. Çавна май уяв умĕн çӳлерех асăннă предприяти ертӳçине Р.Х. ЧЕБЕНОВА калаçăва чĕнтĕмĕр.

САЛАМЛАТĂП, ТАВ ТĂВАТĂП!

Нефть тата газ промышленноçĕнче вăй хуракансем, хисеплĕ ветерансем, сире пурсăра та професиллĕ уяв ячĕпе чунтан тухакан ăшă сăмахсемпе саламлатăп. Сирĕн тăрăшулăхпа, тивлетĕрпе эпир ӳсĕм çулĕпе çӳлеллех улăхма тăрăшатпăр. Çавăнпа та эсир чи ырринне те кăмăллине кăна тивĕç. Хисеплĕ ветерансен пуçарăвĕпе вара пире халĕ районта кăна мар, республикăра та аван пĕлеççĕ, пирĕнтен тĕслĕх илеççĕ. Çакăншăн пирĕн, паянхи ĕçченсен, сирĕн умăрта пуç таймалла, çĕнĕвĕрсене тата ĕçĕрсене ăша хывмалла. Эсир çĕкленĕ ӳсĕм ялавĕпе ăна пĕр ӳкермесĕр малтан мала тытса пымалла. Кашни кил-çуртра яланах «кăвак çулăм» ялкăштăр тесе малашне те тулли кăмăлпа ĕçлемеллĕ.

Çапах та уяв уяв пекех пултăр. Ăна валли сирĕн ăш хĕвел пек савăк кăмăл, çирĕп сывлăх та телей пултăр, сирĕн пата çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ çиттĕр.

терет. Етĕрнери участокра вара 11 службăна 56 çын тытса тăрать. Пысăк коллектив пĕр шухăш-тĕллевпе тăрăшать, палăртнă ĕçе тулли кăмăлпа пурнăçлать.

– Эсир пăхса, тĕрĕслесе тăракан газ хуçалăхĕ пысăк, çавна май ĕç калăпăшĕ те.

– Паян эпир Муркаш районĕпе илсен 171 ялта граждансен çут çанталăк газĕ киле кĕртнĕ 11282 кил-çуртне, ятарласа тунă газ пайлакан 115 пунктпа çак ĕçе пурнăçлакан 100 шкаф пункчĕсене, газ пăрăхĕсене тутăхас-çĕресрен сыхлакан катод хӳтĕлевĕн 115 станцине тата 16 протектор установкине, çĕр айĕнче выртакан 680, 92 çухрăм газ пăрăхне, 399 газ котельнăйĕнчи оборудованин ĕçне пăхса-тĕрĕслесе тăратпăр.

– Район экономикин аталанăвĕнче сирĕн организаци паллă вырăн йышăнать, тупăш шайĕ ӳсни палăрать.

– Çулталăкăн пĕрремĕш çурринче пирĕн тăрăшуллă коллектив 45210,2 пин тенкĕ тупăш илме пултарчĕ. Çак кăтарту иртнĕ çулхи çак тапхăртинчен 1260,3 пин тенкĕ ытларах.

– Паянхи кун сирĕн хăш ĕç çине ытларах тимлĕх уйăрма тивет?

– Хальхи тапхăрта Етĕрне районĕнчи федералла çул-йĕре çĕнетме тивнĕ пирки Никольски тата Иваньково ялĕсем патĕнчи газ пайлакан пунктсем патне пысăк пусăмлă газ пăрăхĕсем хурассипе тимлетпĕр. Ăна валли икĕ миллион тенкĕ уйăрма палăртрăмăр. Çавăн пекех пирĕн кулленхи ĕçсем пур. Газ пайлакан пунктсенче çитес хĕл валли капиталлă юсав ĕçĕсем ирттертĕмĕр. Кунпа пĕрлех çĕр айĕпе каякан газ пăрăхĕсене тутăхасран-çĕресрен сыхлакан катод хӳтĕлевĕн пур станцинче те кулленхи юсав ĕçĕсене ирттертĕмĕр, чылай çĕрте çĕр çийĕн каякан газ пăрăхĕсене сăрларăмăр. Пурнăçламалли ĕç вара тăтăшах тупăнса пырать. Районта чрезвычайлă лару-тăру сиксе ан тухтăр тесе кирлĕ ĕçе вăхăтра та туллин пурнăçлама тăрăшатпăр.

– Вăрттăнлăх мар пулсан сирĕн патра ĕçлекенсен ĕç укçи калăпăшне асăнмăр-и?

– Паллах, вăрттăнлăх мар. Иртнĕ çулхинчен ĕç укçи калăпăшĕ ӳсрĕ, паянхи кун тĕлне вăтам ĕç укçи 17151 тенкĕпе танлашать.

– Халăх куллен «кăвак çулăмпа» усă курать, унăн калăпăшне вара пĕлместпĕр.

– Çулталăкăн пĕрремĕш çурринче халăха пĕтĕмпе 61785,7 пин кубла метр чухлĕ çут çанталăк газĕпе тивĕçтернĕ. Çакă планпа пăхнинчен 1296,7 пин кубла метр ытларах. Ку ĕçрен 28240,8 пин тенкĕлĕх тупăш илнĕ е иртнĕ çулхи çак тапхăртинчен 13 процент ытларах.

Çавăн пекех халăха газ баллонĕпе те тивĕçтеретпĕр. Çулталăкăн пĕрремĕш çурринче 474 тонна кӳрсе килнĕ. Çак ĕçрен 8425,9 пин тенкĕлĕх тупăш илнĕ.

– Уяв уяв пекех пултăр пулĕ, кулленхи ĕçре уйрăмах палăрнисене ятран асăнса хăвармăр-и?

– Палăртнă ĕçе пĕрлех пурнăçлатпăр та никама та уйăрса хăварас килмест. Кашни специалист хăй ĕçне тулли кăмăлпа пурнăçлать.

Р. ИЛЛАРИОНОВА
калаçнă.

Кил тата хушма хуçалăх

Хуçалăх аталанăвĕ – чун киленĕвĕ

Ĕçре телей тупнисем

Тĕрлĕ енлĕ аталанма тĕллев лартнă çын хăй валли яланах ĕç тупать. Вăл хăй шухăш-ĕмĕчĕсене тăтăш çĕнĕлĕхсен шыравĕнче, аталану уçлăхĕнче вĕçтерет. Акă Малиновка ялĕнчи Вениамин Васильевич Федоров мĕн пуррипе кăна çырлахмасть, хушма хуçалăха тĕрлĕ енлĕ аталантарать, унта тăрăшнине вăл чун киленĕвĕ вырăнне хурать.

Кил картине кĕрсен чи малтанах кунта пурăнакан çемье ĕçчен пулни курăнать. Картиш тулли тĕрлĕ чĕр чун. Ирĕкре çўрекеннисем кăна мар, читлĕхре хўтлĕх тупнисем те пур. Каç пулттипе вара кунта пурте пĕрле пухăнсан кашни йышши вылькăх-чĕрлĕхĕн хăйне майлă сасси илтĕнет. Акă нумаях та кĕттермерĕç пĕве хĕрринчен «холмогорский», «тульский-бойцовый», «камогорский» ăратлă пысăк кĕлеткеллĕ хурсем карталанса таврăнчĕç. Пĕри тепринчен илемлĕрех. Кайăк кăвакалĕсем та ав каç пуласса сиснĕ, кил еннеллех сулăннă. «Романовский» ăратлă сурăхсем те путеккисене ертсе таврăнчĕç.

– Кăçал ак çак сурăх пĕр харăсах пилĕк путек туса пачĕ, пурте тĕрĕс-тĕкел аталанаççĕ, – терĕ хуçалăхра тăрăшакан Вениамин Васильевич савăнăçне тата тĕлĕннине пытармасăр.

Картиш тулли эпĕ нихăçан курман йышши ăратлă чăх-чĕп кĕшĕлтетет. Хуçалăхра вĕсем «фаврель», «брама», «кохинхин», «орловский ситцевый», «куланги», «павловский» (юлашки вăхăтра çухалса пыракан ăрат) ăратлă кайăк-кĕшĕк ĕрчетеççĕ. Пĕр йышшисем кĕçатă тăхăннă евĕр, теписем илемлĕ шĕлепкепе утнă пек курăнаççĕ, лешĕсем ава чăпар тĕслĕ тутăр çухнăн утаççĕ. Кашни чăх ăрачĕн хăйĕн читлĕхĕ тата автанĕ пур. Тĕрĕссипе вара хуçалăхра ытти йышши чĕр чун татах та ĕрчет, пурне асăнса та пĕтереймĕн.

Çапах та манăн пĕр ыйту çуралчĕ. Äçтан пуçланнă-ха хуçалăхра тĕрлĕ вылькăх-чĕрлĕх аталантарас, çĕнĕрен те çĕнĕ ăрат туянас шухăш, тĕллев?

– Эпĕ мĕн ачаранах çĕр тата хушма хуçалăх ĕçĕпе туслашнă. 1980-мĕш çулсенче вара «Приусадебное хозяйство» журнала çырăнса илме пуçларăм, кашни номерне тĕплĕн вулаттăм. Унта тĕрлĕ регионсенче хушма хуçалăх тытакансем хăйсен ĕç-хĕлĕ пирки çыратчĕç, халĕ те çаплах. Манăн тĕп ертўçĕ çак журнал пулчĕ пулĕ. Халĕ те унăн кашни номерне упратăп. Вылькăх-чĕрлĕхĕн тĕрлĕ ăрачĕпе çав тапхăртан пуçласа ытларах кăсăкланма пуçларăм эпĕ. Вĕсен ăрачĕсене Подольск, Иваново хулисене, Мускав облаçне тата ытти чылай тăрăха çитсе туянтăм. Эпĕ тĕрлĕ чĕр чуна, паллах, пысăк укçа-тенкĕ тăвассишĕн мар, чун киленĕвĕшĕн усратăп, вĕсемпе ĕçлесе чуна уçатăп. Кашни тĕрли вара хăйне майлă аталанса пырать, – терĕ хуçалăха аталантарнă самантрах район администрацийĕн вĕрентў, çамрăксен политики, физкультурăпа спорт пайĕн методистĕнче ĕçлекен В.В. Федоров.

Вăхăтпа туллин усă курма тăрăшакан çемье пахчари ĕçе те тĕрĕстĕкел йĕркелесе пырать, ку тăрăхра чылайăшĕ ўстермен культура ĕрчетет. Акă тĕслĕхрен, актиниди пирки илтнĕ тата ăна ўстерекен çын сахал.

– «Пĕр йывăç çырла – çулталăклăх витамин», çакăн пек халап сарăлнă çак тĕлĕнмелле ўсен-тăран çинчен. Вăл тĕрлĕ витаминпа питĕ пуян. Эпĕ ыттисене те ăна лартса ўстерме сĕнетп, – терĕ сад ăсти. Пахчана тухсан чăн-чăн Ботаника сачĕ тейĕн. Кунта виçĕ тĕрлĕ виноград, актиниди, лимонник, женьшень, айва, 5 сортлă чие, груша тата ытти те.

Хĕрарăм вара чечек тĕнчине ытларах кăмăллать. Кунта тĕрлĕ чечек ешерет тата ытти чечек куça илĕртет.

– Чечеке кăмăлламан хĕрарăм çук та пулĕ. Çулсеренех эпĕ чечек йăранĕ тăватăп. Кунта ава нумай çул ўсекеннисем, кусем вара пĕр çул лараканнисем. Хăшне-пĕрне çырăнса илтĕмĕр, – терĕ тараватлăн Людмила Аркадьевна ешĕл чечексем çине тинкернĕ майăн. Кунта вара каламасăрах паллă ĕнтĕ мĕн чухлĕ ĕçлемелли. Чунтан ĕçлекен çын кăна çакна парăнтарма пултарать.

Ĕçчен çемье хурт-хăмăр ĕрчетет теççĕ халăхра. Палăртмасăр иртме çук, шăпах Федоровсен ешĕл пахчинче хўтлĕх тупнă та вĕлле хурчĕсем. Вĕсен несĕлесем те çак ĕçпех аппаланнă пулĕ текен шухăш пуçра хĕмленчĕ.

– Хурт-хăмăр ĕрчетес ĕçе эпĕ хам тĕллĕн пуçăнтăм, мана никам та вĕрентмен, нихăш утарта та пулса курман. 1982 çулта утар ĕçĕ пирки çырнă кĕнекесемпе кăсăкланма пуçларăм. Хам хуçалăхра та хурт-хăмăр ĕрчетсе пăхас шухăш çуралчĕ. Çавăнтанпа вара утар тытатпăр хуçалăхра, – терĕ Вениамин Васильевич хăйне пулăшакан Вася ятлă ывăлĕ çине тинкернĕ май. Апла пулсан малашне те ашшĕне пулăшакан, унăн ĕçне çўлтен çўле çĕклекен, çĕнĕрен те çĕнĕ çул-йĕр шыракан пур-ха кунта. Çапла пултăр!

Р. ИЛЛАРИОНОВА.

Пирвайхи вырăнлă пулăшу

Ыйтăр – ответлетпĕр

Хаçатăн иртнĕ номерĕнче вылькăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцин ветеринари врачĕ А. Федорова ĕнесем кĕрхи уй-хирсемпе улăх-çарансенче апатланнă вăхăтра кўпĕнсе каясси пирки аса илтерў туса пачĕ. Питĕ аван. Пĕлес килет, ĕне кўпĕнсех кайсан ăна малтанхи пулăшу епле памалла? Вылькăх тухтăрĕ пырса çитиччен мĕнле ĕçсем туса ирттермелле тата мĕнрен асăрханмалла?

И. СОКОЛОВ.

Мăн Сĕнтĕр сали.

Вулавçă ыйтăвĕ ыттисене те интереслĕ пуласса ăнланатпăр. Çавăнпа та хаçатăн иртнĕ номерĕнче пуçланă калаçу патне тавăрнса И. Соколов ыйтăвĕ çине хуравлама та вылькăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцин ветеринари врачне Алина Петровна ФЕДОРОВĂНА чĕнтĕмĕр. Вылькăх тухтăрĕн хуравĕ çапла пулчĕ:

– Кĕтўре çўрекен ĕне кўпĕнсех кайрĕ пулсан, ăна пирвайхи пулăшу пама пĕлни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çакна валли пĕрлешўллĕ хуçалăх ертўçисемпе зооветспециалистсен, ял старостисен кĕтўçсене ветсумкăсемпе тивĕçтермелле. Унта обязательнăй йĕркепе сĕт кислоти, çунтарнă магнези, тимпанол, мăн хырăма шăтарса сывлăш кăлармалли трокар пулмалла. Çак хатĕрсем килти хушма хуçалăхсенче пулни те кирлĕ вăхăтра ытлашши пулмĕ.

Мĕн тумалла-ха ĕне кўпĕнсе кайрĕ пулсан? Инкек тўсекен вылькăха малтанах 10 – 15 грамм сĕт кислоти, 160 – 200 грамм тимпанол, 20 грамм çунтарнă магнези пани лайăх. Каламалла, çунтарнă магнезипе сĕт кислотине çур литр шыва ярса ирĕлтермелле. Тимпанол – усă курма хатĕр препарат. Вĕсем пулмасан ĕнене 2 – 3 литр тин кăна сунă сĕт ĕçтермелле те кўпĕннĕ вырăна сивĕ шыв ярса тăмалла.

Кўпĕннĕ ĕнене пирвайхи пулăшу панă вăхăтра е ун хыççăнах обязательнăй йĕркепе вылькăх тухтăрне чĕнмелле.

Кўпĕнсе кайнă ĕнене пулăшу париччен çак инкекрен асăрханма çăмăлрах пулнине манас марччĕ. Ăна кассу çўрекенсемпе кĕтў пăхакансен асрах тытасчĕ. Çавăн чух çеç кĕр мăнтăрĕпе тивĕçлипех савăнма пулĕ. Хирсем пушанаççĕ тесе тимлĕхе çухатас марччĕ кăна.

Редакцирен: килти хушма хуçалăхра вылькăх-чĕрлĕх тытакансен ыйтусем нумай, анчах вĕсем пирки эпир пĕлсех каймастпăр. Çакна шута илсе хаçат редакцийĕ сирĕнтен çырусем кĕтет. Сирĕн ыйтăвăрсене эпир тивĕçлĕ специалистсем патне çитерсе вĕсем çине «Кил тата хушма хуçалăх» кăларăмра хурав парăпăр.

Виноград

Пахчаçăсем сăнанă тăрăх виноградăн нумай сорчĕсем çурла уйăхĕн пĕрремĕш çурринче пиçсе çитеççĕ. Çакă çырла ўсме пăрахнинчен, вăл çемçелнинчен, çырла тĕсĕ улшăнма пуçланинчен палăрать.

Уйăх календарĕ

Авăн уйăхĕнчи аслати – вăрăм кĕре

Авăн уйăхĕ пахча çимĕçпе улма-çырла пухмалли, çуллахи ĕçсене вĕçлемелли вăхăт. Çак уйăх йăрансене пушатать, нўхрепе пуянлатать. Ку вăхăт пахча çимĕçпе улма-çырлана тăварламалли тата маринадламалли чи паха тапхăр. Хĕл хырăмĕ тутă пултăр тесен пахчаçăн паян пĕр канăç та çук.

ПАХЧАРИ ĔÇСЕМ

Авăн уйăхĕн 1-мĕшĕ. Пахча çимĕçе шăварма тата шĕввĕн апатлантарма юрамасть.

Авăн уйăхĕн 1–4-мĕшĕсем. Пушаннă йăрансене пусса кăпкалатмалла, тислĕк хывмалла. Теплицăсемпе парниксене органика юлашкисене хумалла. Пахча çимĕçсене тăварлама тата консервăлама меллĕ вăхăт.

Авăн уйăхĕн 4–6-мĕшĕсем. Теплицăсемпе парниксене ўсен-тăран каяшĕсене хумалла. Çимĕçсене хĕл валли упранма хумалла.

Авăн уйăхĕн 6–8-мĕшĕсем. Кĕрхи ыхра шăлĕсене лартма юрать. Петрушка, укроп, шпинат, салат акса хăварни ытлашши пулмасть. Купăста пухма пуçлаççĕ.

Авăн уйăхĕн 8–10-мĕшĕсем. Пушаннă йăрансене пусса кăпкалатмалла. Çулçăсене пуçтарма тытăнмалла.

Авăн уйăхĕн 10–11-мĕшĕсем. Кĕрхи ыхра шăлĕсене лартмалла.

Авăн уйăхĕн 11–13-мĕшĕсем. Нимĕн те лартма, куçарса лартма, касса иртме юрамасть. Пахча çимĕçе тăварлама тата йўçĕтме хума та меллĕ мар.

Авăн уйăхĕн 13–15-мĕшĕсем. Пахча çимĕçсене фосфорпа кали удобренийĕсемпе апатлантарни тата шăварни лайăх. Тăварлама, типĕтме, консервăлама меллĕ вăхăт.

Авăн уйăхĕн 15–18-мĕшĕсем. Тымар çимĕç пухмалла, Кĕрхи ыхра лартмалла.

Авăн уйăхĕн 18–20-мĕшĕсем. Лартни тата куçарса лартни мелсĕр пулать. Купăста касма юрать.

Авăн уйăхĕн 20–23-мĕшĕсем. Йăрансене пусмалла, тислĕк тăкмалла, тымар çимĕç пуçтармалла, пахчана çўпçапран тасатмалла.

Авăн уйăхĕн 23–25-мĕшĕсем. Пахча çимĕçе лартма тата куçарса лартма юрăхсăр кунсем. Çимĕçсене типĕтни, консервăлани лайăх.

Авăн уйăхĕн 25–26-мĕшĕсем. Купăстан кĕрхи сорчĕсене касма юрать. Йăрансене пусмалла.

Авăн уйăхĕн 26–28-мĕшĕсем. Нимĕн те лартма, куçарса лартма, касса иртме юрамасть. Пахча çимĕçе тăварлама тата йўçĕтме хума та меллĕ мар.

Авăн уйăхĕн 28–29-мĕшĕсем. Сăтăрçăсемпе кĕрешсе йăрансене пусса кăпкалатни вырăнлă. Минераллă удобренисем хывса хăварма юрать.

Авăн уйăхĕн 29–30-мĕшĕсем. Пушаннă йăрансене пусса кăпкалатмалла. Çулçăсене пуçтармалла, кĕрхи ыхра лартмалла. Ўсен-тăрансене лартма тата куçарса лартма юрать. Çимĕçсене тăварлама тата маринадлама меллĕ.

КĔРХИ САДРА

Авăн уйăхĕн 1-мĕшĕ. Пахча çимĕçе шăварма тата шĕввĕн апатлантарма юрамасть. Çимĕç панă хăмла çырлин туратисене иртмелле.

Авăн уйăхĕн 1–4-мĕшĕсем. Вулă таврашсене пусса кăпкалатмалла, тислĕк хывмалла. Йывăçсене лартма тата куçарса лартма юрать.

Авăн уйăхĕн 4–6-мĕшĕсем. Хăмла çырлисене хунавсем валли авса хумалла, йывăçсем çинчен чирлĕ туратсене иртмелле.

Авăн уйăхĕн 6–8-мĕшĕсем. Пахча çимĕç йывăççисене лартма юрать. Вулă таврашсене пусса кăпкалатмалла. Нумай вăхăт упрамалла мар çимĕçсене пуçтармалла.

Авăн уйăхĕн 8–10-мĕшĕсем. Йывăçсем çинчен чирлĕ туратсене иртмелле. Йывăçсен вуллисене шуратмалла. Нумай вăхăтлăха упранакан çимĕçсене пуçтармалла.

Авăн уйăхĕн 10–11-мĕшĕсем. Вулă таврашсене пусса кăпкалатмалла.

Авăн уйăхĕн 11–13-мĕшĕсем. Нимĕн те лартма, куçарса лартма, касса иртме юрамасть. Çўп-çапсемпе каяшсене пухса çунтармалла.

Авăн уйăхĕн 13–15-мĕшĕсем. Пахчари йывăçсене фосфорпа кали удобренийĕсемпе апатлантарни тата шăварни лайăх. Çимĕçсене пухма меллĕ вăхăт.

Авăн уйăхĕн 15–18-мĕшĕсем. Йывăçсене хĕле хатĕрлесе вĕсен вуллисене шăшисем кăшласран хўтĕлемелле. çакна валли вĕсене хыр лăссисемпе çыхни меллĕрех.

Авăн уйăхĕн 18–20-мĕшĕсем. Çимĕç паман, чирлĕ туратсене иртмелле, çулçăсене пуçтарса çунтармалла.

Авăн уйăхĕн 20–23-мĕшĕсем. Сивĕсем пуçланнă май сăтăрçăсемпе кĕрешме хурлăхан, крыжовник, хăмла çырли патĕнчи тăпрана пусса кăпкалатмалла. Сырлан, хура пилеш пуçтармалла. Вĕсене консервăлама юрать.

Авăн уйăхĕн 23–25-мĕшĕсем. Пахчари йывăçсене лартма тата куçарса лартма юрăхсăр кунсем. Çимĕçсене типĕтни, консервăлани лайăх.

Авăн уйăхĕн 25–26-мĕшĕсем. Çимĕçсене типĕтни, консервăлани лайăх.

Авăн уйăхĕн 26–28-мĕшĕсем. Нимĕн те лартма, куçарса лартма, касса иртме сĕнместпĕр.

Авăн уйăхĕн 28–29-мĕшĕсем. Сăтăрçăсемпе кĕрешсе вулăсем таврашĕнчи çĕре пусса кăпкалатни вырăнлă. Минераллă удобренисем хывса хăварма юрать.

Авăн уйăхĕн 29–30-мĕшĕсем. Кирлĕ çĕрти çĕрсене пусса кăпкалатмалла. Çулçăсене пуçтармалла. Ўсен-тăрансене лартма тата куçарса лартма юрать.

Эрехпе услам туни ырри патне çитермест

Судра

Юлашки вăхăтра пахалăхсăр алкоголь продукцийёпе услам тăваксен, çавна май харпăр хăй тата ытти çыннăн сывлăхне, пурнăçне хавшатаксен йышё палăрмаллах ӳсрё. Ютă уйăхёнчен пуçласа çак тапхăрччен кăна çак сиенпе çыхăннă уголовлă виçё ёçе пăхса тухма тиврё.

Акă Çурлатри ялёнчи пёр хёрарăм хăй хуçалăхёнчен пахалăхсăр, çын сывлăхне сиен кӳме пултаракан пёр кёленче эрехе 50 тенкёпе сутнă, наркăмăш сиенё пирки сутуçă аван пёлнё. Алкоголь продукцийё фенилалкоголь тата сывлăхшăн сиенлё ытти микрохутăшран тăнă. Çапла вара çак факта тёпе хурса район сучё хёрарăм преступлени тунине çирёплетнё, РФ УК 238 статйин 1 пайёнче пăхнă йёркене пăснă тесе йышăннă. Алкоголь продукцийёпе услам тунăшăн 20000 тенкё штраф укçи тӳлемеллине палăртнă. Каласа хăвармалла, алкоголь продукцийёпе сутă тунăшăн штраф укçи çак калăпăшран та пысăкрах пулма пултарать.

Хуçалăхра пахалăхсăр эрех сутас ёçе ытларах ниçта та ёçлемен хёрарăм тата пенсионер явăçать, çапла майпа укçа-тенкё ёçлесе илме тёв тăвать. Анчах та мёншён-ха сутуçă эрех сиенё пирки маларах шутламасть? Тепёр тесен, шăпах хёрарăм çемьери арçын эрех ёçнипе нушаланмасть-и? Ача-пăча ашшё ӳсёр пулнипе сивё пӳртре выçăллă-тутăллă ларнине хёрарăм курмасть-и? Апла пулсан мёншён-ха эрехпе услам туса ыттисене куççуль парнелет сутуçă? Тем тесен те эрех сутуçисене чунлă çынсем тесе калаймăн. Апла пулсан айтăрха пускилсене, пёлёшсене тата ыттисене те çак ёçе пурнăçлама, çемьесене аркатма парар мар, курнине курмăш тăвар мар, вёсен пӳтсёр ёçёсене пёр харăссăн пӳлер.

Хăшёсем тёрлё сиенлё хутăшсенчен хатёрлесе эрех сутаççё, теприсем килте юхтарнипе услам тăваççё. Çапах та икё тёслёхё те йёркене пăсни пулать.

Акă Хунтăкассинчи хёрарăма çак тёлёшпех явап тыттарма тата 5000 тенкё штраф тӳлеттерме тиврё. Йёркене пăснă хёрарăм хăй айăплă пулнине пёлсе тăрсах айăпа йышăнман. Нихăçан та спиртпа услам туман тесе çирёплетнё. Суд вара тёрёслёхе çиеле кăларнă, вăл айăплă пулнине палăртнă.

Çапла вара эрех сутакан та ырри патне çитеймест, ăна туянаканни те хăй пурнăçне хăй аллипех таптать. Апла пулсан тёрёс çултан пăрăнас марччё, ун йышшисене тёл пулсан та асăрхаттарасчё.

Э. СТЕПАНОВА,
Муркаш район сучён судйи.

Ыйту-хурав

Саккун пуриншён те пёрре

Паянхи черетлё кăларăма Муркаш район прокурорён пулăшаканё А.Н. ТИХОНОВ ертсе пырать, еткерлёх тёлёшпе ыйтусем чылай килнёрен вёсем çине хуравлать.

Еткерлёх ыйтăвёсемпе

Пурнăçран уйрăлса кайнă çывăх çыннăн салука (заложенная) хывнă хваттер пурччё. Ăна вăл еткерлёхпе (по наследству) халаллана. Çак хваттер кама юлма пултарать-ши?

Ятне палăртман.

Хваттере кама халаллана, çавăн пулать. Анчах та Раççей Федерацийён Гражданла Кодексён 353 статйипе килёшӳллён пурлăх салука хывăнать.

Еткере тивёçменнисем камсем?

Саккун тёлёшёнчи ăнлантарусем ахаль çынна ăнланма йывăр, аслăрах çулхисене вара пушшех те. Гражданинăн еткере тивёçме ирёк çук тени мёне пёлтерет-ши?

Р. АЛЕКСАНДРОВА.

Гражданин хăш-пёр чухне еткере тивёçеймесен те пултарать. Ку категорие суд йышăнăвёпе кăна палăртаççё. Енчен те вăл е ку çын еткерçёне, унăн ирёкне хирёçле ёçсем тунă, ун пирки вара халалта палăртнă пулсан гражданин çак категорие кёрет. Çак ăнлантару гражданинăн еткере тивёçме ирёк çук тенине пёлетерет.

Ашшё-амăшён ирёк пур-и?

Пурнăçра темёнле синкер те пулма пултарать, ашшё-амăшё ача-пăча хыççăн еткерçё пулма пултарать-и?

Çатракасси ял тăрăхё.

Раççей Федерацийён Гражданла Кодексён 1117 статйипе килёшӳллён еткерлёхе тунă самант тёлне ашшё-амăш прависене каялла тавăрман пулсан вёсем ача-пăча еткерçи пулма пултараймаççё.

Тав тăватпăр

Çатракасси ял тăрăхне кёрекен Кашмаш ялёнче пурăннă, ăратлă выльăх ёрчетекен «Свобода» хуçалăх-заводра нумай çул ёçленё, хамăра çуратса пурнăç çулё çине кăларнă тата пирёншён яланах тёкё пулнă, йывăрлăхра тăтăшах пулăшнă мăшăра, аттене, хуньстарике, асаттене, çывăх тăвана Константин Васильевич Данилова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирёнпе пайланăшăн ăратлă выльăх ёрчетекен «Свобода» хуçалăх-завод ертӳçипе ёçченёсене, Федераци казначействин ЧР Управленийён Муркаш районёпе ёçлекен 12-мёш номерлё пайне, Кашмашра пурăнакансемпе кӳршёсене, тăвансене чёререн тав тăватпăр.

Даниловсемпе Арапкинсен çемйисем.

Пирён çывăх çыннăмăра, Çурлатри ялёнче пурăннă Иван Семенович Аксендарова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирёнпе пёрле çак пысăк хуйхăна пайланăшăн Муркаш район администрацине, Муркаш почтине, хурăнташ-тăвансене, ял-йышпа пускилсене, тус-юлташсене, пынă пётём халăха чёререн тав тăватпăр.

Аксендаровсен çемйи.

Пирён юратнă мăшăра, кинёме, аннене, Çеçмер ялёнче пурăннă Ольга Вячеславовна Смирновăна юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирёнпе пайланăшăн «Моргаушская» чăх-чёп фабрикин директорне Н.Г. Ванеркина, профком ертӳçине Т.В. Каликовăна, унти столовăй ёçченёсене Лидăна, Зинăна, Вальăна, В.А. Данилов водителе, фабрика ёçченёсене, тăвансене, тус-юлташсене, ял-йыша, унта пынă мён пур çынна чёререн тухакан тав сăмахё калатпăр.

Смирновсен çемйи.

КУПЛЮ ПУХ ПЕРО
новые и старые, мешаные перины и подушки с выездом на дом.
Куриное не предлагать.
Тел.: 8-962-561-81-15. Иван.

БЕТОН, РАСТВОР любых марок.
Тел.: 38-87-78, 8-927-66-88-778.
Песок, ОПГС (гравмасса), щебень.
Тел.: 38-84-40, 8-927-66-88-440.
Доставка миксерами, самосвалами. 31-50.

Местное время	суббота 3 сентября 04:00	10:00	16:00	22:00	воскресенье 4 сентября 04:00	10:00	16:00	22:00	понедельник 5 сентября 04:00	10:00	16:00	22:00	вторник 6 сентября 04:00	10:00	16:00	22:00
Облачность %																
Осадки мм																
Температура °С	+15	+20	+21	+15	+11	+17	+21	+14	+10	+16	+19	+15	+11	+14	+18	+16
Давление мм	740	740	740	742	744	746	746	748	748	749	747	747	744	740	737	737
Влажность %	97	85	59	75	92	66	45	81	95	66	47	63	96	95	86	94
Ветер м/сек	3 3	3 3	3 3	3 3	3 3	Ю-З 5	3 4	С-З 2	С 3	С 4	С 4	С 5	С 6	С 5	С-В 6	В 4
Солнце восход/заход		06:00	19:43			06:02	19:41			06:04	19:38			06:06	19:36	
Луна восход/заход		13:44	21:18			14:58	22:03			15:58	23:01			16:44	-	
фаза																

В Москву и Московскую обл. требуются: фасовщицы-упаковщицы, грузчики (кондитерские фабрики, молочное производство, снековая продукция, мясокомбинаты, склады).
Питание, проживание предоставляются.
Вахта 15/15, 20/20, 30/15, 30/30, 60/30.
З/п от 25000 руб. (сдельная).
Тел.: 8(8352)23-22-22. 5-5.

* * *

Продаю песок, гравмассу, бой кирпича, керамзитоблоки, с доставкой. Услуги экскаватора. Тел.: 67-66-95, 8-905-347-99-15. 1-5.

* * *

Ёне, вăкăр, тына, пăру, сурăхсем туянатпăр. Тел.: 8-903-063-07-57. 1-2.

* * *

ПРОДАЮ МЕТРОВЫЕ ДУБОВЫЕ ДРОВА 1 КУБ. М. – 1000 РУБ. ДОСТАВКА ПО РАЙОНУ. ТЕЛ.: 8-908-307-07-44. НИКОЛАЙ.

Çёр участокё çуртпа пёрле туянатăп. Тел.: 8-902-240-66-94. 4-4.

пластиковые ОКНА
Немецкое качество
Окна STAR
6-камерный профиль ПО ЦЕНЕ 3-камерного
скидки до 35%
подробности по телефонам: 8-9603101816
Пенсионерам доп. скидки
Офис продаж в здании рынка с.Моргауши
Окна стали дешевле...

Розыск

19 августа 2011 года во 2 часу ночи гражданка Шутеева Наталия Ивановна 05.01.1989 года рождения, жительница г. Чебоксары, ул. Сапожникова, 17-35, находясь в доме отца Шутеева И.М. в с. Юнга по ул. Яблоневая, 19 Моргаушского района ушла из дома в неизвестном направлении.

Особые приметы: волосы светлые, распущенные до плеч, является инвалидом 2 группы, общительна, под правым глазом имеется родинка, походка быстрая, ранее бывали случаи ухода из дома.

Пёлтерӳсем. Объявления

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 1-5.

Продаю: гравмассу, щебень, песок, керамзит, бетон, торф, чернозем. С доставкой. Скидки.
Тел.: 8-927-668-70-15. 1-13.

ООО «Строитель» требуются рабочие по производству керамзитобетонных блоков. (Моргаушский район, д. Юнгапоси). Реализует блоки керамзитобетонные пропаренные. Обращаться по тел.: 69-7-23, 69-8-59, 63-1-19.

* * *

Срочно продаю жилой бревенчатый дом с газовым отоплением и хозяйственными постройками, плодоносящий сад 40 соток в д. Мемеккасы Моргаушского района. Цена договорная. Тел.: 8-905-027-70-87. 1-2.

* * *

Куплю корову, бычка, телку, овец.
Тел.: 8-905-342-39-43. 6-10.

* * *

Продаем солому в тюках. Тел.: 8-927-992-05-19. 1-5.

* * *

Ремонт бытовых холодильников на дому. Гарантия, качество. Тел.: 8-905-199-83-87, 62-0-45. 1-5.

* * *

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник.
Тел.: 8-906-131-32-75, 8-927-859-91-55. 1-5.

* * *

Продаю: автомашину Лада 111730 «Калина» (Универсал), новая, без пробега. Цена договорная.
Тел.: 8-927-856-95-00.

* * *

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус, цемент, шифер, профнастил (крашеный, оцинкованный). Обращаться: «Рука мастера», с. Моргауши и д. Калайкасы. Тел.: 8-903-346-40-58. 2-5.

* * *

В МУ «Централизованная бухгалтерия администрации Моргаушского района ЧР» требуется бухгалтер со знанием 1С. Тел.: 63-2-94.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 1-9.

ПРОФНАСТИЛ
производство и продажа
любые размеры
(до 14 метров)
короткие сроки изготовления
(в течение 1 дня) услуги
по доставке и монтажу
цена от 191,67 руб/кв.м.
Тел.: 8-937-393-88-18. 2-4.

Комбайнпа тырă вырса пама пулăшатпăр тата купăста сутатпăр. Тел.: 8-906-381-22-99, 8-960-311-23-87.

* * *

Ёне, вăкăр, тына, пăру, сурăх туянатăп.
Тел.: 8-905-343-60-63. 2-8.

ПРИГЛАШАЕМ НА ВЫСТАВКУ–ПРОДАЖУ
9 и 30 сентября с 9 до 12 часов в РДК с. Моргауши

– **глазные капли экстракт Алоэ по Филатову** (близорукость различной степени, нарушение механизмов адаптации зрения к темноте, центральная и периферическая дистрофия сетчатки, блефарит, конъюктивит, кератит, ирит, помутнение стекловидного тела, катаракта, комплексная терапия первичной глаукомы) – 490 руб.;
– **глазные капли «Хрусталин»** (катаракта, глаукома и др.) – 490 руб.;
– **сироп «СОТКА-Черничный»** (повышает остроту зрения) – 325 руб.;
– **жевательные конфеты «VIRTA Черника»** (для улучшения зрительных функций) – 65 руб.;
– **красное пальмовое масло «ЗЛАТА ПАЛЬМА»** 1,1 литр – 1850 руб (от двух бут. – 1650 руб.); 500 мл – 1200 руб.; 250 мл – 740 руб.; 125 мл – 930 руб. (для глаз).;
– **лечебные крема «Универсальный» – 460 руб., «Черное золото»** – 400 руб. (при мышечных и суставных болях, хондрозах, артрозах, остеохондрозе, при варикозном расширении вен и др.).

Также в продаже более 100 товаров для вашего здоровья и долголетия.

Коллективы отдела культуры и архивного дела администрации Моргаушского района, профсоюза работников культуры и администрации Моргаушского сельского поселения выражают глубокое соболезнование Р.П. Аксендаровой, администратора Сюрлатринского сельского клуба по поводу преждевременной смерти любимого мужа

Ивана Семеновича
АКСЕНДАРОВА.

Муркаш районёнчи «Çёнтерӳ ялавё» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ёçёсен, информаци политикин тата архив ёçён министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ёçёсен, информаци политикин тата архив ёçён министерствин «Муркаш районён «Çёнтерӳ ялавё» хаçат редакцийё» автономи учрежденийё.

Тёп редакторшăн В.Л. ШАПОШНИКОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялё, Мир урамё, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тёп редактор - 62-1-36, явапла секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайё - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайё - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийёсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ёçлекен управленийё 2009 çулхи раштавăн 7-мёшёнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрацилене.

Калăпăшё 1,5 пичет листи.
Ал çырăвёсене рецензилемеççё, каялла тавăрса памаççё, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççё.
Рекламăпа пёлтерӳсен чăнлăхёшён вёсене паракансем явапла.

ИЗДАНИ ИНДЕКСЁ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйё Белов А.П.
Пичете панă 02.09.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4357.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çёнтерӳ ялавё», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.